# ШĂНКĂРАВ

23-мĕш №

2024-МĔШ ÇУЛХИ АКА УЙĂХĔ

## Ака уйăхĕн 25-мĕшĕ – чăваш чĕлхи кунĕ

ШКУЛ ХЫПАРĔСЕМ

********************************

И.Я. Яковлев çуралнăранпа 176 çул çитнĕ май……………………………………...2-12 с.

Хăнара тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисем пулчĕç……...........................................................13 с.

Шкул хаçачĕ
2022 –мĕш çулхи
нарăс уйăхĕнчен тухма пуçланă

Ертӳçисем:
Ермошкина Раиса Николаевна
Сютова Кристина Васильевна

# Ырă кун пултăр!



# Ака уйăхĕн 25-мĕшĕ - Чăваш чĕлхи кунĕ.

**Чăваш чĕлхи - тăван чĕлхе**
**Эс -чи пахи, эс -чун уççи.**
**Чăваш чĕлхи - тăван чĕлхе,**
**Пин чĕлхерен чи çепĕççи.**




# Чӑваш чӗлхи кунӗ

Чӑваш чӗлхи ... пирӗншӗн вӑл асаттесен пехилӗ, асаннесен кӗлли, пирӗншӗн вӑл вӑрман сулхӑнӗ, тӑп-тӑрӑ ҫӑлкуҫ шывӗ, пирӗншӗн вӑл чӗре таппи, чун хавалӗ чи ачаш хусканӑвӗсем, пирӗншӗн вӑл пурнӑҫ...

Г. Н. Волков



# Чӑваш чӗлхи кунӗ ячӗпе!



# Саламлатпăр!!!



# *Санарпуç вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхи эрнинче ирттерме палăртнă ĕçсем*

| №п/п | Палăртнă ĕçсем | Класс | Явапли |
|---|---|---|---|
| 1 | «И.Я. Яковлев калавĕсем» литература вулавĕ | 1-4 классем | 1-4 класс ертӳçисем |
| 2 | «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхем». Пултарулăх ĕçĕ. | 5-9 классем | Ермошкина Раиса Николаевна |
| 3 | «Пирĕн пултаруллă ентешĕмĕрсем» презентаци | 10-11 классем | Семенова Ирина Геннадиевна |
| 4 | Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – 2024 | 5-11 классем | Ермошкина Раиса Николаевна, Семенова Ирина Геннадиевна |
| 5 | «Пĕлетĕр-и?» викторина | 5-9 классем | Ермошкина Раиса Николаевна |
| 6 | И.Я. Яковлевăн «Кулачă» тата «Уçăлма тухнă шăши çури» калавĕсем тăрăх ирттернĕ квест | 5-7 классем | Ермошкина Раиса Николаевна |
| 7 | И.Я. Яковлев калавĕсене шкул ачисем иллюстрацилени. Проект ĕçĕ | 5-6 классем | Ермошкина Раиса Николаевна |
| 8 | «К.В. Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕ» проекта хӳтĕлени | Цыганов Артем, 8 класра вĕренекен | Ермошкина Раиса Николаевна |
| 9 | «И.Я. Яковлев тата унăн вĕренекенĕсем» | 7-9 классем | Ермошкина Раиса Николаевна |
| 10 | «И.Я. Яковлев çамрăксен чĕринче» фильма пăхни | 5-11 классем | Ермошкина Раиса Николаевна |
| 11 | «Королевство потерянных языков» юмаха пăхни | 5-11 классем | 5-11 класс ертӳçисем |
| 12 | «Чувашский язык» фильма пăхни | 5-11 классем | Ермошкина Раиса Николаевна |

## Тăван чĕлхем - чăваш чĕлхи

Манăн тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи. Ку чĕлхепе эп мĕн ачаранпах калаçатăп. Чĕкеç чĕлхи пек чĕвĕл-чĕвĕл, анне алли пек çепĕç те илемлĕ чĕлхе.

Чăваш чĕлхипе ман ват асатте-асанне, кукаçисемпе кукамайсем - пĕтĕм тăван-хурăнташ калаçнă. Вăл мана çуратнă анне чĕлхи, мана ăс-тăн панă атте чĕлхи.

Эпĕ тăван чĕлхепе калаçма, юрлама, сăвă калама юратăп.

Тăван чĕлхе вăл – Турă панă пуянлăх, ăна упрама тăрăшмалла, аталантармалла. Тăван чĕлхе вăл – пирте хамăрта, хуть те ăçта кайсан та, кирек епле чĕлхепе пуплесен те – вăл пирĕн юнра, чун-чĕрере.

Эп – чăваш ачи. Хам чăваш пулнишĕн мухтанатăп.

Вера Большакова, 5-мĕш класра вĕренекен

*И.Я. Яковлев калавĕсене пĕлетĕр-и? Ӳкерчĕксем калавăн хăш пайĕпе тӳр килеççĕ-ши? Стрелкăсемпе кăтарт.*

| | |
|---|---|
| Хутаçça çăкăр чиктерет |  |
| Акă, ачам, çак кăксене кăкла |  |
| Тепĕртакран ашшĕ пасартан таврăнчĕ тет |   |
| Ача çиме ларчĕ |   |















Кăçал, ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче, тăван халăхăмăра çутта кăларакан И.Я. Яковлев çуралнăранпа 176 çул çитрĕ. Чăваш чĕлхи эрнинче irttерме палăртнă ĕçсемпе килĕшӳллĕн, 5-мĕшпе 6-мĕш класра вĕренекенсем И.Я. Яковлевăн «Ача-пăча валли çырнă калавĕсем» тăрăх ӳкерчĕксем турĕç, сăрласа илемлетрĕç, синквейн çырчĕç.

Вĕсем Сирĕн кăмăлăра кайрĕç-и?

















**ВИЛНĔ ЧĔПĔ ЧĔРĔЛНИ**

Пĕрре мана тырă вырнă вăхăтра чĕпĕ сыхлама хăварчĕç. Ун чух чĕпĕсем тухни виççĕмĕш кун анчахчĕ, çавăнпа вĕсене пӳртех хупса хăварчĕç.

Аттесем кайсан эпĕ чĕпĕсене çитере пуçларăм. Пирĕн пӳртре таракан пит нумайччĕ. Эпĕ чĕпĕсене таракан çитерес тесе сакка илтĕм те ăна урай çумне шакка пуçларăм. Шакканă чух тепле пĕр чĕппе сăмсиичен тиврĕ те чĕпĕ çаврăна пуçларĕ. Çаврăнсан-çаврăнсан кайрĕ ӳкрĕ те вилчĕ. Эпĕ ăна илтĕм те чĕрĕлмĕ-и-ха тесе хĕвел ăшшине чӳрече çине хутăм. Хăраниппе хамăн кăçта кайса кĕме çук чĕре çунать, нимĕн тăва пĕлмесĕр тула тухса кайрăм. Урамра ман юлташсем выляса çӳреççĕ. Манан вылес та килмест. Курăк çине лартăм та аттесене мĕн калăп-ши ĕнтĕ тесе тем пек хуйхăратăп, ларсан-ларсан çавăнтах йĕрсе те илетĕп тата хам. Ача ăсĕ çав, темĕн йĕмелли пур çав чĕпĕшен! Унтан пӳрте кĕтĕм те пăхатăп: хайхи чĕпĕ чӳрече çинче лара парать. Чĕрĕлнĕ ку, ăш çунтармăш! Эпĕ ăна чӳрече çинчен илсе урайне ятăм та, ку амăшĕ патне чупса кайрĕ. Вара тин манăн чĕре лăпланчĕ.

Каçхине аттесем вырмаран таврăнчĕç. Эпĕ мĕн пулнине вĕсене вал каçах каласа кăтартаймарăм, пĕр-икĕ эрне иртсен тин каларăм. Аттесем вара кулса каларĕç:

- Ку айван мĕнпур чĕппе вĕлерсе пĕтерĕ, - терĕç. Çавăнтан кайран эпĕ чĕпĕсене алла тытма та хăраттăм.




8-мĕш класра вĕренекен Артем Цыганов чăваш поэзийĕн классикĕ К.В. Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕ пирки каласа пачĕ.

# Сармантейӑн

сар



чӑххи

Сар ҫӑмарта тунӑ тет…



Паян, ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче, Санарпуç вăтам шкулĕнче вĕренекенсем Украинăра пулса иртекен ятарлă çар операцине хутшăнакан С.В. Яковлевпа тата А.И. Николаевпа тĕл пулчĕç. Вĕсем вăрçă хирĕнчен икĕ эрнелĕх тивĕçлĕ канăва килнĕ. Сергей Владимирович тата Андрей Иванович – иккĕшĕ те пирĕн ентешсем, «Сура» тата «Атăл» батальонра çапăçаççĕ.

Тĕл пулу питĕ кăмăллă иртрĕ. Ачасем вăхăт тупса хăнана килнĕ салтаксемпе ăшшăн пуплерĕç, хăйсене кăсăклантаракан ыйтусем тавра шухăшларĕç. Çĕр-шыв хӳтĕлевçисем вĕренекенсене пылак çимĕçпе сăйларĕç, вĕренӳре ĕлкĕрсе пыма, спортпа туслă пулма сĕнӳсем пачĕç. Санарпуç шкулĕнче вĕренекенсем те паттăрсене ырлăх-сывлăх, тӳсĕмлĕх, телей сунчĕç.

«Эпир çĕнтеретпĕр!» - çак шухăш пурин чунĕнче те шанчăк çуратрĕ.

## ***Тăван çĕр-шывăмăр хӳтĕлевçисене тайма пуç!!!***





Чăваш çĕр-шывĕ —
çĕр пин сăмах,
çĕр пин юрă,
çĕр пин тĕрĕ çĕр- шывĕ